**ПАУЛЬ УАЙТ**

# ТОТО УПĂТЕПЕ УНĂН ТУСĔСЕМ

## Художникĕ Петр Орам

стр. 3

-5-

# БУХУ ГИППОПОТАМ

Хĕвеллĕ хӳхĕм кун. Тото упăтепе Твига жираф джунглире кӳлĕ хĕрринче выляççĕ. Ывăнса çитиччен сикеççĕ-чупаççĕ те çемçе курăк çине канма лараççĕ.

– Э, кур-ха, кам килет çавăнта! – кăшкăрса ячĕ сасартăк Тото.

Твига кулать:

– Мĕскĕн Буху! Пĕлесчĕ, мĕн шухăлать-ши халĕ вăл хăйĕн пысăк пуçĕпе? – тет. – Шеллес килет ман ăна, пăхма та салху.

– Ватă мĕскĕн Буху, – ихĕлтетет Тото. – Ялан хурлăхлă вăл. Мĕнле те пулин хаваслантарма пултарăпăр-ши эпир ăна?

-7-

Çывăхарнă май, гиппопотам мăкăртатни илтĕнчĕ:

– Ăçта ман мăйăр? Вăл ак çак чул çинче выртатчĕ. Халĕ – çук, – тет. – Мĕн тума кирлĕ пулчĕ вăл сана, упăте?

– Чăн калатăп, эпĕ илмен, – ăнлантарать Тото.

– Тĕрĕс, вăл илмен, – тет çирĕплетсе Твига. – Мăйăра Павиан Гун вăрларĕ. Эпĕ хам куртăм.

– У-у, ку джунглире никама та шанма çук, – пуçне пăркалать Буху гиппопотам. – Шалт аптрамалла! Мĕн пек пысăк лайăх мăйăрччĕ!

-8-

– Мĕн тери хĕвеллĕ лайăх кун паян, Буху! – тет Твига.

– У... ррр... тӳсме пултараймастăп вĕри хĕвеле, вăл манăн тире пăсать. Тирĕм тăртанса каять, кĕçĕтме тытăнать – эсир ун пеккине тĕлĕкре те курман! – хурлăхлăн суллать пысăк пуçне Буху. – Ман сăмса тата, апăрша сăмси! Юхать. Мăшăл-мăшăл мăшăлтатса аран сывлатăп, хартлата-хартлата илетĕп. Ууу... Ак, курăр, халех эпĕ апчхулатма тытăнатăп...

Тото, хăвăрт чупса пырса, ун çăварне хупласа ĕлкĕрет. Буху куçне мăч-мăч хупса тăрать.

– У, а, тавтапуç, Тото! Апчхулатма тытăнсан, ман сăмса юхать, куççулĕ тухать, ман... э-э...

– Курăр-ха, джунглире чечексем паян уйрăмах илемлĕ вĕт? – тет Твига, калаçăва урăх еннелле пăрма тăрăшса.

-11-

– Мĕн тери тутлă шăршăллă тата! – хутшăнать Тото.

– Хм... – кăмăлсăр Буху, – юратмастăп эпĕ çав сарă чечксене, кĕреннисене те юратмастăп. Шăрша туймастăп эпĕ. Сăмса питĕрĕннĕ, кĕçĕтет, кăлт-калт турткаланать. Сывлăш çитмест мана, сунас килсе хуплать...

– Ара, ара, – ассăн сывласа илет Твига, – канса лар, акă, сулхăнра, уçă сывлăшпа сывла.

– Ара çав, ку вăштăр-вăштăр çил пĕтĕм джунглие уçăлтарса ярать, – хутшăнать Тото.

-12-

– Çапла, – мăкăртатать Буху, – питĕ уçăлтарать. – Сирĕн çилĕр ак çак вĕтĕ сарă чечексен тусанне вĕçтерет. Вăл ман сăмсана кĕрет те питĕ кĕçĕттерет, вара... Вара... – гиппопотам хăйĕн пысăк пуçне хурлăхлăн пăркалать. – Пĕлесчĕ сирĕн, мĕн тери асапланатăп эпĕ сунас килсе апчхулатнă чух! Аяк пĕрчисем ыратаççĕ, куçăм шывланать, хăлха кашлать...

-15-

– Енчен те санăн асапланмасăр майĕ çук пулсан, тархасшăн, шăпăрт асаплан, – тет ăна Тото.

– А-ай! – йынăшать Буху. – Шăпăрттăн асапланас килмест ма нăн, пурте илтчĕр, пурте пĕлччĕр...

Тото хăлхине аллипе хуплать.

– А-а-а! – кăшкăрать вăл. – Эсĕ пысăк, самăр, мĕскĕн, мăкăрти чĕрчун!

– Кампа калаçатăн эççĕ?! – харкашса пӳлет ăна Буху.

– Санпа! – кăшкăрать Тото. – Ăсу санăн ашакăнни чухлĕ те çук!

– Санăн пур-и?

– Пур, паллах! – тавăрать пĕчĕк Тото.

– Ха-ха-ха! – кулать Буху, анчах самантрах чыхăнса каять. – Ау,ау! – мĕскĕннĕн йынăшать вăл. – Кулнă чухне манăн аяк пĕрчисем ыратаççĕ, çурăм ыратать... а...

-17-

Твига калаçăва каллех урăх еннелле пăрасшăн:

– Кӳлĕ çинелле пăхăр-ха эсир! Мĕн куратăр унта? – тет.

– Пĕчĕк антилопа Дик-Дик шыва кĕрет унта. Чăмать, чӳхенет, – тавăрать Тото.

Твига вăрăм мăйне тăсса инçетелле тинкерсе пăхать:

– Эпĕ шыв çинче вăрăм хăмăр пĕрене куратăп, – тет.

Буху пуçне ерипен пăркалать:

– Ку кӳлĕре нимĕнле пĕрене те çук, – тет вăл.

– Анчах эпĕ те, акă, пĕрене куратăп! – пăлханса кăшкăрса ярать Тото.

– Ан сӳпĕлтетĕр! – мăкăртатать Буху. – Эпĕ çак кӳллĕн пур кĕтессинче те пулса курнă – ниçта пĕр нимĕнле пĕрене тĕл пулман.

– Ан мухтан! Ку кӳлĕре крокодил та пулма пултарать, вăл са на самантрах хыпса çăтнă пулĕччĕ.

„Тото – пуçтах“, – шухăшлать Твига.

– Çак кӳлĕре крокодил пултăр-и? – харкашать Буху. – Ан култар! Крокодил!..

– Твига, пĕрене çухалмарĕ-и-ха, çаплах куратăн-и ăна? – ыйтать Тото.

– Куратăп, – тет Жираф, – вăл антилопа еннелле ишет.

-18-

Ĕнтĕ Буху та кĕске мăйне тăрăшсах тăсса пăхать кӳлĕ ва рринелле. Вара калать хайхи:

– Ку пачах та пĕрене мар, ку вăл чăнахах крокодил, пĕчĕк а нтилопăна хăвалать.

Çапла калать те Буху тăвайккирен кӳлĕ хĕррине ыткăнса ана ть, шыва шампăртаттарса сикет. Тото хăраса кайса чĕтĕреме тытăнать, çăмĕ вирелле тăрать.

– Асту, крокодилсем вĕсем çыртаççĕ! – кăшкăрать вăл сехĕрленсе.

– Гиппопотамсем те çыртма пĕлеççĕ, – тет ăна Твига жираф. – Кур-ха, крокодил пирĕн Бухуна курчĕ те айккинелле пăрăнчĕ, тарать!

-21-

Савăннă Тото йăкăлт-якăлт сиккелет.

– Çăлчĕ! Вăл пĕчĕк антилопăна çăлчĕ! – кăшкăрать упăте. – Ырă ватă Буху! Урра! Урра! Урра!

Хайхискер сасартăках шăпланчĕ те тĕлĕннипе ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илчĕ:

– Çак вăйлă, хăюллă гиппопотам ахаль чухне пĕрмай йынăша кан, мăкăртатса çӳрекен Буху тусăмăрах-и вара? Анчах мĕнле-ха вăл, тин кăна-ха кăмăлсăрскер, питĕ кичемскер, тепĕр сама нтранах ырă, маттур пулма пултарать?

Жираф кăмăллăн кулать.

– Гиппопотамшăн савăнас килет манăн, – тет вăл. – Пирĕн Буху хăй çинчен анчах, хăйĕн инкекĕсем çинчен анчах шухăшла нă чухне хăйне шеллеме тытăнать, кичемленсе каять, кăмăлĕ пăсăлать. Анчах, ыттисен инкекĕсене курсан, вăл самантрах улăшăнать, вĕсене пулăшма васкать.

-23-

Вĕсенчен леререхре, кӳлĕ хĕрринче, пĕчĕкçеççĕ Дик-Дик а нтилопăпа Буху калаçса тăраççĕ.

– Тавтапуç сана, Буху, – тет Дик-Дик. – Пĕтĕм чĕререн тав тăватăп! Пулăшрăн мана, çăлтăн. Тавтапуçах.

– Хм... хм... Пулăшрăмах-и вара? – кулкалать Буху.

Çыран хĕрринчен шывалла кĕрсе каять, кӳлĕ варринелле ишет.

– Ах, мĕнле илемлĕ пурăнăç! – мăкăртатать хăй.

Паллах, санăн та пулкалать ĕнтĕ кун пекки: савăнас та килмест, выляс та килмест. Кама тĕл пулатăн, çавăнпа хирĕçсе каятăн...

Тепрехинче, кăмăлу пăсăк чухне, Буху гиппопотама асна ил: хăвăн тусна, аннӳне е йăмăкна пулăшма май туп. Вара кăмăлу тӳрленĕ, сана савăнăçлă, савăнăçлă пулса кайĕ. Енчен те санăн кăмăл хуçăлнинчен те пысăкрах йывăрлăх килсе тухрĕ пулсан, çавăн çинчен Иисус Христоса кала. Вăл сана никамран та лайăхрах илтĕ, никамран та лайăхрах пулăшĕ.

-25-

# АШАК ЗЕБРА ПУЛСА ТĂНИ

Ачасем пĕррехинче:

– Зебрăсем яланах хура-шурă йăрăм-йăрăм пулнă-ши? – тесе ыйтнă.

Вĕсем баобаб йывăçĕ айĕнче ларнă, хăйсене Дауди çĕнĕ халап каласа па расса кĕтнĕ.

Дауди джунглире тухтăра пулăшса ĕçлекен çын пулнă. Ĕнтĕ çак Дауди ăшшăн кулса илнĕ те ачасене каланă:

– Мĕнле, эсир çавна та пĕлместĕр-и вара? – тенĕ. – Апла эпĕ сире пĕр а шак çинчен каласа кăтартам. Çав ашак ниепле татăклăн шут тăвайман. Итлĕр, акă мĕнле пулнă...

-26-

Пунда ашака хăйĕн тĕсĕ килĕшмен.

– Тĕрĕс мар ку! – ӳпкелешнĕ вăл. – Симба арăслан хитре хăмăр тирлĕ. Твига жирафăн тирĕ тĕксĕм тумхаллă ылттăн тĕслĕ. Манăн вара мĕнле-ха? Манăн тирĕм хура...

-27-

– Ара, çав тĕрлех япăх-и вара хура тĕс? – ыйтать ха йхискертен Тото упăте. – Унăн вараланни палăрмасть...

Буху гиппопотам пуçне пăркаласа илет:

– Хм, чăнах, кăлăхах тиркетĕн хура тĕсе. Лайăх тĕс вăл, питĕ вырăнаçуллă. Çĕрле сана леопард та, арăслан та курмасть.

– Ах! – хашлатса сывлать ашак. – Ах, эпĕ урăх тĕслĕ пулса нччĕ!

Тото упăте чеен кулкаласа тăрать.

– Джунглире пĕр вырăн пур, – тет вăл, – эсĕ мĕн ĕмĕтленетĕн, ĕмĕтӳ çитет вара çав вырăнта, – тет.

Буху каллех пысăк пуçне кăмăлсăррăн пăркаласа илет.

– Унта темле хăрушă мĕлкесем куçа курăнаççĕ, – тесе ăнла нтарать вăл. – Пунда унта кайсан, унăн... хм...

– Вара унăн ĕмĕчĕ çитет, хи-хик! – ихĕлтетсе кулать Тото.

-28-

– Ăçта çав вырăн, хăш тĕтле? – тӳсĕмсĕррĕн ыйтать Пунда. – Каласам мана, Тото, ăçта вăл ĕмĕтленнĕ ĕмĕт çитет?

– Асамлă çĕр хăвăлĕнче, – тет Тото.

– Атя, эппин, часрах каяр унта! Манăн асамлă çĕр хăвăлне ка яс килет!

Буху каллех пуçне пăркалать:

– Ку вăл ăслă япала тетĕн-и?

– Паллах, ăслă мар, – кулать Тото. – Анчах интереслĕ.

– Ертсе кай, тархасшăн, мана унта! – йăлăнать Пунда. – Унта мĕн ĕмĕтленни çитет пулсан, эпĕ хама валли шурă тир ыйтса илĕп. Ах, мĕн тери аван вăл шурă ашак пулса тăма!

-30-

Мĕн тăвăн, тăрса утаççĕ хайхи Тото каланă çĕр хăвăлĕ еннелле.

– Ах, ман урасем... Тăпăлса тухаççĕ пулĕ ман урасем, ывăнтăм, – пашкаса сывлать Буху. – Ах, вăрăм та иккен çулĕ!..

– Акă, çитрĕмĕр! – кăшкăрса ярать Тото. – Акă хайхи çав çĕр хăвăлĕ! Атя, Пунда, кĕр те шала – хăвăн ĕмĕтне кала.

Пунда шикленсе каялла чакать:

– Ай-уй! тĕттĕм унта!

– Тĕрĕс, – килĕшет Буху, – тĕттĕм. Тĕттĕм те шуçлак. Анчах, хм, эсĕ урăх шут тытма пултаратăн.

– Шăплан-ха эсĕ, Буху! – тӳсĕмсĕррĕн пӳлет ăна Тото. – Пундăн хăйĕн пуçĕ пур, хăйне мĕн кирлине хăех татса парĕ. Эй, Пунда ашак, шурă пулас килет-и сан?

– Пулас килет, паллах, – тет Пунда. – Шурă пулас килет. Пулас килет! Пулас килет!

– Апла халех çĕр хăвăлне кĕр те – хăвăн ĕмĕтне кала.

-32-

– Виççӗмӗрӗн пӗрле кӗме май çук-и унта? – шикленсе, иккӗленсе тăрать Пунда ашак.

– Хм, ара, манăн нимӗнле ӗмӗт те çук. Нимӗнле те пулас килмест манăн. Мӗнле пур, çаплах лайăх, – хирӗçлет Буху. – Са нăн, Тото, мӗнле кăмăл? Çӗр хăвăлне кӗрсен, унта темӗн хăрушшăн чашкăрнине илтсен, эсӗ ашакран маларах шурă пулса тăма ӗлкӗретӗн. Шап-шурă.

Тото çиллессӗн кулса илет:

– Эсӗ питӗ хăюллă, анчах çӗр хăвăлӗ умӗнче çеç хăюллă. Ху кӗр-ха вăт...

– Ан шавлăр, – пӳлет ӗнтӗ çаксене ашак. – Эпӗ кӗретӗп унта. Пӗччене́х.

Чăнах та кӗрсе каять хайхи. Бухупа Тото ăна тулта кӗтсе тăраççӗ. Кăштахран Буху калать:

– Каласа кăтартмалла марччӗ санăн ăна çак çӗр хăвăлӗ çинчен, – тет.

-35-

– Эй, эсир! Курăр-ха мана! – илтӗнсе каять сасартăк Пунда а шак сасси.

Тӗлӗннипе Тото ваштах сиксе илет:

– Шурă! Пунда чăнахах та шурă ашак пулса тăнă! Мӗнле пулчӗ вара ку санăн?! – шавлать вăл.

Пунда ăнлантарать:

– Эпӗ тӗттӗм çӗр хăвăлне кӗтӗм те: „Манăн шурă пулас килет!“ – тесе кăшкăртăм. Вара шурă пулса тăтăм. Джунглире эпӗ пӗртен-пӗр шурă ашак! Килӗшет-и сана, Тото, манăн çӗнӗ тӗсӗм?

– Шурă тӗс çинче пӗтӗм хура-мара курăнса тăрӗ. Нимӗн туса н та çапла таса халлӗн нумай çӳреймӗн.

– Эпӗ асăрхануллă пулăп, – шантармаваскать Пунда.

Буху пуçне пăркалать:

– Хм, пурпӗрех санăн шурă çăмлă тирӳ вараланмасăр пулмӗ. Кӗçех вараланчăк сăрă пулса тăрăн. Хура тӗслӗ пулнине нимӗн те çитмест, вараланни палăрмасть.

Пунда пуçне усать.

– Ах, – тет вăл, – çак шурă тирӗме курсан, малтанах ыттисем манран шалт тӗлӗнӗç, савăнӗç, мухтӗç. Анчах часах вараланса пӗтӗп те, манран кулӗç кăна. Ах, пулсанччӗ эпӗ... мӗн...

-36-

Çапла каласа Пунда тусĕсем умĕнчен пăрăнать.

– Ха, ĕçта каять-ха вăл? – тĕлĕнет Буху.

– Каллех çĕр хăвăлне, – ăнлантарать Тото. – Тен, унăн каллех хура тирлĕ пулас килет?..

– Хм, йывăр та иккен ăна татăклăн шут тума. Пĕтĕмпех эсĕ айăплă, тӳрккес упăте. Эсĕ илĕртсе килтĕн кунта пире... Ай, мĕн, ара, ку?

-39-

– Тото! Буху! – кăшкăрса чĕнет вĕсене çĕр хăвăлĕнчен тухса тăнă ашак. – Курăр-ха, эпĕ каллех хура!

– Чăнах, – пуçне сулать Буху, – ку вăл эпир лайăх пĕлекен Пунда ашак. Мĕн тери хитре хура ашак!

Пунда пуçне каçăртать:

– Хам сан кăмăлна кайнăшăн эпĕ питĕ хавас. Хура тĕс питĕ хитре. Çапла-и, Тото?

– Çапла. Анчах пит темĕнскерех те мар.

– Мĕн каласшăн эсĕ капла? – ыйтать ашак.

– Мĕн-и? – ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илет Тото. – Джунглире пур ашак та хура. Енчен те санăн ыттисенчен уйăрăлса тăрас килет пулсан, санăн урăхларах пулмалла.

Пунда малти урипе тăрăсс тапса илет:

– Анчах эсĕ хăвах каларăн вĕт-ха!..

– Пĕлетĕп, пĕлетĕп, – килĕшет Тото. – Анчах эпĕ ун чух лайăххăн шухăшласа илеймен. Эсĕ тĕрĕсех каланă: хура тĕс кичем тĕс, нимĕн лайăххи те çук ун çумĕнче.

Пунда тарăхса каять:

– Эппин, эпĕ татах çĕр хăвăлне кĕретĕп те татах мĕн тăватăп!

Аташма юратакан Тото хавасланса кăшкăрать:

– Эпĕ те кĕретĕп санпа! – тет.

– Сирĕнпе пĕрле манăн та кĕме юрать-и? – ыйтать Буху.

Тото кулса ярать:

– Мĕн усă парĕ-ши ку сана? – тет.

Кĕреççĕ.

– У-у-у! – темле хăрушшăн илтĕнет çĕр хăвăлĕнче Буху са сси. – Мĕн тери тĕттĕм кунта! Пач тĕттĕм!

– Эй! – кăшкăрать Тото.

Çĕр хăвăлĕ тăрăх ахрăм сасă янăраса каять:

– Эй-э-эй!!!

– Ан ашкăн, – чарасшăн Тото упăтене Буху. – Капла шавласа эс куçа курăнакан мĕлкесене вăратăн.

– Пунда, кала хăвăртрах хăвăн ĕмĕтне. Мĕнле ĕмĕт пур, ça вна кала. Ай, мĕн вара ку? – Тото темле çемçе япалана пырса çапăнать.

– Ай, ыраттаратăн! Ман хырăм вăл, – тарăхать ашак.

– Ара, тĕттĕм-çке кунта, эсĕ вара хура. Нимĕн те курăнма стăн.

– Паçăрах каларăм вĕт-ха, – мăкăртатать Буху, – хура тĕс питĕ лайăх тĕс, тĕттĕмре ăна нимĕнле арăслан та курмасть.

– Анчах та манăн шурă пулас килет! – юнтарса курнăçланать Пунда.

– Ку вăл питĕ хăрушă, – мăкăртатать Буху.

– Апла манăн хура пулас килет... – йĕрмĕшет Пунда.

– Апла эсĕ каллех ытти ашаксем пекех пулăн, – йĕкелтет Тото.

– Çук, çук! – кăшкăрса ярать ашак. – Апла эпĕ... Апла манăн шурă пулас килет... е хура... çук-ха, шурă... Мар! Хура! Шурă!..

Çĕр хăвăлĕнче ахрăм янăрать:

– Шурă! Хура! Хура-а!..

-42-

Сасартăк темĕн хăрушшăн кĕрĕслетни илтĕнет.

– Хăвăртрах! – кăшкăрса ярать Тото. – Çĕр хăвăлĕ ишĕлет! Чупар! Хăвăртрах тухса ĕлкĕрер кунтан!

Такăна-такăна ўксе чупаççе.

-43-

– Ха-ха-ха! – ахăлтатать çĕр хăвăлĕнчен тухса тĕнĕ Тото.

– Хо-хо-хо! – кулса илет Буху та.

– Мĕн кулăшли тупрăр вара? – тĕлĕнет тусĕсенчен Пунда.

– Ха-ха-ха! Эсĕ хура-шурă йăрăм-йăрăм! Зебра пек.

-45-

– Йăрăм-йăрăм?! – йынăшса ярать Пунда ашак. – Пулас килмест манăн йăрăм-йăрăм! Пулас килмест зебра пек! Манăн каллех ĕмĕтĕме каламалла! Часрах! Халех!..

Анчах кая пулнă ĕнтĕ калама. Туссем тухса ĕлкĕрнĕ-ĕлкĕрменех çĕр хăвăлĕ ишĕлсе анать. Пунда хурлăхлăн пуçне пăркалать:

– Ах, мĕншĕн эпĕ çирĕп шухăшлă мар? Мĕншĕн татăклă шут тытаймастăп? – тет, йĕрет.

Дауди халапне итлесе ларнă хĕрачасенчен пĕри, Елизавета, алă çупса х янă:

– Ăнлантăм, ăнлантăм! Вăл татăклă шухăш тытайманнипе зебра пулса тăнă! – тенĕ.

– Каллах хура ашак пулас тенĕ çĕре вара çĕр хăвăлĕ ишĕлсе аннă, – хутшăннă тепĕр ачи. – Кая юлнă Пунда.

Дауди килĕшсе пуçне сулнă:

– Йăрăм-йăрăм зебрăна курсан, кашнинчех аса илĕр: пирĕн пурсăмăрăн та пурăнăçра татах та татах татăклă шут тумалла, çирĕп шухăш тытмалла, – вĕрентсе каланă вăл. – Пурăнăçра чи кирли, чи пысăкки мĕнле çирĕп шухăш-ха, ачасем?

– Иисуса пĕтĕм чĕрепе йышăнма шухăш тытни, – савăнăçлăн кулса та вăрнă ăнланулла Елизавета.

– Тĕрĕс. Иисус Христос каланине ан манăр. „Никам та икĕ хуçана пăхăнса тăма пултараймасть“, тенĕ Вăл. Иисус пире Турра пăхăнса тăмашкăн татăклă шухăш тытма, унăн пысăк кил-йышне хутшăнма пулăшасшăн.

-47-

# ТОТО ХĂРУШЛĂХА ЛЕКНИ

-49-

– Мĕн çиме юрататъ леопард? – ыйтнă ачасенчен Дауди, джунглири тухтăра пулăшса тăракан.

Пурте харăссăн:

– Упăте ашĕ çиме юрататъ вăл! – тесе каланă.

Вара Дауди ачасене Тото пĕчĕк упăте çинчен пĕр халап каласа кăтартнă.

Тото упăте йывăç çинче ларать. Хайĕн учитĕлне Твига жира фа тимлесе итлеме тăрăшать вăл. Анчах тимлесе итлеме çăмăл мар. Туратти çинче Тото канăçсăррăн пăркаланать, йăшăлтатса илет, мĕншĕн тесен унăн лĕпĕшсемпе выляс килет.

Твига ăна хыттăн асăрхаттарать:

– Лайăххăн итле, Тото, – тет. – Санăн хуть те мĕнле пулсан та джунглин виçĕ саккуне астуса юлмалла. Вĕсем санăн пурăнăçна çăлса хăварма пултараççĕ.

-55-

Тото хаваслăн турат çинчен турат çине сике-сике каять. Са сартăк ăна гиппопотамăн хулăн сасси илтĕнет:

– Э-э... ырă ир пултăр, упăте, – тет Буху.

– Ырă ир, Буху! Эсĕ хăçан та пулин зебра курнă-и?

Гиппопотам хăйĕн пысăк пуçне сулса илет:

– Э-э, курнă. Вăл шурă йăрăм-йăрăмлă хура ашак. Е... хура йăрăм-йăрăмлă шурă ашакчĕ-и? Ах, яланах пăтраштаратăп эпĕ çакна.

Тото кулса ярать.

– Ăçта курма пулать-ши ăна? Пĕлетĕн-и çавна эсĕ?

– Э-э, пĕлетĕп. Шавламастăн пулсан, кăтартма пултаратăп, У-у, э-э, пăх-ха ав çавăнталла!

Тото анасласа илет. Твига ăс парса малалла калаçать:

– Пурăнăçра час-часах хăрушлăх килсе тухать, çавăнпа са нăн çак саккунсене пĕлмеллех. Вĕсене астуса тăрсан, эсĕ хăрушлăха лекмĕн. Вĕсене пăссан, инкеке кĕрсе ӳкĕн.

– Пĕрремĕш саккуна эпĕ ĕнтĕ пăхмасăр калама пĕлетĕп, – мухтанать Тото. – ÇЫВĂХРА ЛЕОПАРД ПУРРИНЕ СИССЕН, ЧАСРАХ ЙЫВĂÇ ТĂРРИНЕ ХĂПАР ТА ЧИ ÇИНÇЕ ТУРАТ ÇИНЕ КАЙСА ЛАР! Вара вăл сана тытаймĕ.

Твига пуçне сулать:

– Тĕрĕс. Иккĕмĕш саккун çапла калать: НИХĂÇАН ТА ЗЕБРА ХЫÇНЕ АН ТĂР!

– Анчах эпĕ зебрăсене нихăçан та курман, – хирĕçлет Тото.

– Курăн-ха. Пĕр шутламан çĕртенех курăн ак, – асăрхаттарать Твига, – вара асту: зебра хыçне пырса ан тăр. НИХĂÇАН ТА!

– Мĕншĕн? – ыйтать Тото.

– Зебра тапать, – ăнлантарать Твига.

– Уй! Тапнине юрамастăп эпĕ, – ихĕлтетсе кулать пĕчĕк упăте. – Виççĕмĕш саккунĕ мĕнле? Вăл мĕн калать?

– НИХĂÇАН ТА ÇĔЛЕНЕ КУÇĔНЧЕН АН ПĂХ! Астуса юлтăн-и ĕнтĕ çак саккунсене, Тото? Пăхмасăр калама пултаратăн-и вĕсене?

– Пăхмасăр каласа парсан, манăн выляма кайма юрать-и вара?

Твига килĕшсе пуçне сулать.

– Апла эпĕ калама тытăнатăп, – тет Тото.



– Пĕрремĕшĕ: хам çывăхра леопард пуррине сиссен, эпĕ йăпăр-япăр йывăç тăррине хăпарса каятăп та чи çинçе турат çине вырăнаçса ларатăп. Иккĕмĕш: нихăçан та зебра хыçне пырса тăмăп. Виççĕмĕш: нимĕнле çĕлене те куçĕнчен пăхма стăп. Куртăн-и, виçĕ саккуне те пĕлетĕп эпĕ.

– Аван, – тет Твига. – Лайăх астуса тăр вĕсене. Халĕ кайса выляса çӳреме пултаратăн.

-57-

Упăте савăнса каять:

– Ав мĕнле иккен вăл – зебра! Çыртать-и вăл?

– Э-э, çук, çыртмасть. Вăл питĕ лăпкă чĕрчун. Санăн ун шăлĕсенчен хăрамалли çук. Унăн кайри урисенчен çеç асăрхан.

– Хăвăрт чупать-и вăл, Буху?

– Пĕлместĕп, – шухăшлăн хăшлатса илет гиппопотам.

– Жираф пек, питĕ хăвăрт чупма пĕлет-ши вăл?

– Калаймастăп. Курман, – салхуланать Буху.

Тото пăлханса ӳкет:

– Манăн пĕлес килет! Мĕнле чупать зебра, çавна пĕлес килет!

Тото ĕнтĕ йĕплĕ хулă шырама чупать. Часах шыраса тупать.

-58-

Зебра хыçне пырса тăрать.

– Эй, Буху, кур-ха! Эпĕ ăна пĕççинчен йĕплĕ хулăна тирĕп те, мĕнлерех те чупса кайĕ вăл!

Буху кăмăлсăррăн, йывăррăн мăшлатса сывлать:

– Халех пăрах йĕплĕ хулла! Эй, Тото, ан ухмахлан!

– Эй! Эй, Буху, кур-ха, кур!.. Ай!!

Зебра пĕррех шартлаттарса тапать те, Тото сывлăша сирпĕнсе...

-61-

...Буху умне шаплатса ӳкет.

Буху ун пуçĕ вĕçне пырса тăрать.

– У-у,й-й, хытă ӳкрĕн-и?

Упăте шăпăртах.

– Тото, чĕнсем. Кала, ăçтан ыраттартăн?

Тото куçне уçать те йынăшса ярать.

– Хм... хм... – тет Буху. – Хытă тапнă сана зебра. Э-э, эпĕ Твигăна чĕнсе килетĕп. Вăл кун пек чухне мĕн тумаллине пĕлме кирлĕ. Эп халах. Часах чĕнсе килĕп.

-62-

Тото тăрса ларать те пуçне ярса тытать. Сасартăк ăна çӳрăмĕ хыçĕнчех темĕн чашкăрни илтĕнет. Такам хуллен хăйăлтатса ыйтать унран:

– Мĕн ш-ш-шавларăр, мĕн пулчĕ кунта?.. – тет.

– Ухамах зебра тапрĕ мана, – мăкăртать Тото.

– Ш-ш-ше-ел... – чашăлтатса илтĕнет сасă.

– Курмастăп эпĕ сана, – йынăшса ярать Тото. – Ман куçсене тем пулчĕ, пуç кашлать тата... каш-каш...

– Эппин, эпĕ сан патна ç-çывăхарах ш-шуса пырам-ха. Ĕнтĕ куратăн-и?

Тото куçне мăч-мăч хупкалать.

– Кам эсĕ?

– Эп ç-ç-çĕлен. Эсĕ – ч-ч-чирлĕ. Пăх мана куç-çран. Эсĕ – питĕ ывăннă.

Пĕчĕк упăте, хăй те сисмест, анаслама тытăнать.

– Хуп куç-ç-çусене, ç-ç-çывăрр...

-64-

Твигăпа Буху чупса çитеççĕ. Твига калать:

– Тотона çĕлен çывăратса янă, – тет.

Буху çĕлене хыттăн кăшкăрса пăрахать:

– Халех хăп пĕчĕк упатĕ çумĕнчен! Ан тĕкĕн ăна!

Çĕлен сиввĕн чашкăрать:

– Пăрăн кунтан, атту эп сана с-с-сăхап!..

– Эс мана сăхайрап тетĕн-и? – кулса илет Буху. – Тăхта, ха лех кăтартап ак сана!

Çĕлен, авкаланса, шуса тарать.

Твига жираф Тотопа ачашшăн калаçать:

– Вăрансам, – тет. – Куçна уç, – тет.

– Мĕн пулнă кунта? – вăранса кайса анаслать Тото.

– Эпĕ мĕн вĕрентсе каланине итлемен эсĕ, Тото ачам. Ça вăнпа сана çĕлен кĕç çеç çисе яман. Эсĕ ăна куçĕнчен пăхнă.

– Вăл манпа питĕ ăшшăн калаçрĕ... – пуçне пăркалать Тото.

-66-

– Ăшшăн калаçĕ вăл, чеескер, – тет ăна Твига. – Аса ил-ха а кă, мĕн тесе асăрхаттарать джунглин виççĕмĕш саккунĕ?

– Çапла, çапла, халĕ эпĕ пĕтмпех аса илтĕм, – ӳпкелешет пĕчĕк Тото упăте. – Сана итлеменшĕн каçар мана...

Тӳлек-тӳлек çанталăк тăнă. Баобаб йывăçĕ айĕнче кăвайт ялкăшса çуннă. Джунглире темĕнле кайăк кăшкăрни илтĕннĕ.

– Тото ĕнтĕ саккуна пăхăнни питĕ кирлине аван пĕлет. Итлеме пĕлни пурнăçа çăлса хăварма пултарать, – каласа пĕтернĕ Дауди хăйĕн халапне. – Иисус хăйĕн вĕренекенĕсене акă мĕнле каланă: „Мана юратакан Манăн Сăмаха тытса тăрать“, тенĕ.

– Анчах мĕнле пĕлмелле-ха куна? Манăн мĕн тумаллине Иисус мĕнле ка лĕ мана?

Ачасем Дауди ăнлантарса парасса кĕтсе ларнă. Дауди вĕсене аллинчи Библи кĕнекине çĕклесе кăтартнă.

– Сирĕн Унăн Сăмахне итлесе пурăнмалла, – ăнлантарнă Дауди. – Çак кĕнекере Вăл пирĕнпе калаçать. Библие мĕн чухнĕ ытларах вулăпăр, ха мăрăн мĕн тумаллине çавăн чухлĕ лайăхрах пĕлсе пырăпăр эпир.

-69-

# ÇУРАЛНĂ КУН

-70-

Дик-Дик антилопа питĕ савăннă:

– Мĕн тери лайăх вырăн ку! Çапла мар-и, Буху? – тет.

– Хм, чăн та, кун пек чаплă вырăна часах тупаймăн, – кăмăллăн калаçать хулăн сасăллă Буху гиппопотам.

– Тĕрĕс калатăр, аван вырăн: хӳтĕ, тӳлек, – килĕшет вĕсемпе жираф. – Çак улах пĕвене пирĕн валли ятарласа парĕн пысăк тус слон пĕвеленĕ, – ăнлантарать вăл.

– Пирĕнтен хамăртан кун пек пĕве тăвасси ĕмĕрте пулас çук, – мăкăртатать пуçне сулкаласа Буху.

Сасартăк шыв шампăрт! туса сирпĕнни илтĕнчĕ. Пĕчĕк пĕвеваррине такам чул ывăтрĕ. Пĕчĕк Коко упăте ашкăнать иккен.

-73-

Вӑлваскасах пӗр ывӑҫ вак чул пуҫтарчӗ те пӗве ҫине пеме тытӑнчӗ. Питӗ интереслӗ! Чул пере-пере Коко ҫыран хӗррине ҫитсе тӑчӗ, хавасланса кайнӑскер, пӗвене сикрӗ. Шыва ша мпӑртаттарса, пӗвене пӑртатса ашкӑнма пуҫларӗ. Анчах чи хӗрсе вылянӑ самантра ӑна темӗнле пысӑк ҫӑвар хӳринчен кап ярса илчӗ те ҫырана туртса кӑларчӗ.

– Ҫитет аташса! – илтрӗ Коко упӑте Буху гиппопотамӑн ҫиллес сассине. – Ҫитет шыва пӑтратса! Ку илемлӗ, тӳлек пӗвене ырӑ слон пӗвеленӗ. Вӑл унӑн!

Буху Кокона пӗве хӗрринчен аяккинерех сӗтӗрсе кайрӗ те, ҫӑварне уҫса, упӑтене ирӗке ячӗ.

Коко хӑйӗн хӳрине хыпашласа пӑхрӗ.

– Эсӗ пысӑк, хитре мар, йӗрӗнчӗк чӗрчун! – тарӑхса кӑшкӑрчӗ вӑл. – Манӑн хӑҫан, ӑҫта, мӗн тӑвас килет, эпӗ ҫавна тӑватӑп!

Вӑл гиппопотама чӗлхе кӑларса кӑтартрӗ те пальма тӑррине хӑпарса тарчӗ.

-74-

Ыттисем пӗве хӗрринчен кайса пӗтсен, Коко, ӗнтӗ пӗчченех юлтӑм-ха, ӗнтӗ мана никам та курмасть тесе, каллех ашкӑнма тытӑнать. Таса шывалла курӑк кӑкла-кӑкла ывӑтать, тӑм муклашкисем перет. Часах чечексене те кӑклама пуҫларӗ, вӗсене те, тӑпраллӑ тымарӗ-мӗнӗпе, пӗвенелле вӑркӑнтарать. Унтан вӑл, хӑй пӑтратса, вараласа пӗтернӗ пӗвене пӑхса са вӑнма, кӑшт айккинерехе кайса ларать. Ларать кӑна, сасартӑк слона курах каять. Лӑпкӑн пӑхса тӑрать слон, пӗр сӑмах та ша рламать.

Коко сиксе тӑрать те самантрах йывӑҫ ҫине хӑпарса каять. Турат ҫинчен турат ҫине сиксе, аяккинелле ыткӑнать. Ҫил пек вӗҫтерсе пырать вӑл. Юлашкинчен, ывӑнса ҫитсе сывлӑшӗ пӳлӗннипе, чарӑнса туратсем хушшинче пытанса ларать.

-76-

Кун хыççăн кун иртет. Хайхи Коко пĕчĕк упăтен çурална кунĕ çитет. Сасартăк йывăçсем хушшинче Кокопа юнашар жираф пуçĕ курăнса каять.

– Коко, эпĕ сана çуралнă кун ячĕпе ырă сунса саламлатăп!..

Упăте жираф çурăмĕ çине сиксе ларать те савăнăçлан кулса ярать.

– Кăçал ку ĕнтĕ манăн юлашки çуралнă кун, – ăнлантарать вăл. – Хăвăртрах ӳссе çитес тесе, çулталăкра эпĕ çуралнă кунăма икĕ хутчен уявлатăп.

– У-у, ку чăнахах та упăтелле ăслăлăх, – кулкаласа илет жира ф. – Э, чим-ха, Коко, итле, сана слон курасшăнччĕ... Калама хушрĕ.

Иртнине аса илсе лайăхмарланнă Коко çĕр çине сиксе анать те чăтлăха кĕрсе çухалать.

-79-

Пĕр лапсака йывăç айĕнче вăл Дик-Дик антилопăна тĕл пула ть. Дик-Дикĕн икĕ мăйраки хушшинче – пиçсе çитнĕ пысăк ка вăн.

– Çуралнă кун ячĕпе сана эпĕ, Коко, чĕререн саламлатăп. Илсем, авă, мăйракамсем хушшинчен манăн парнеме.

Коко тархаслаттарса тăмарĕ. Кавăна илчĕ те васкасах çиме пуçларĕ. Ту-утлă!

– Мĕн тери аван иккен çуралнă куна уявлама, – кавăна çăвар туллин чăмласа калаçать пĕчĕк упăте. – Паянтан эпĕ çуралнă кунăма çулталăкра виçĕ хутчен уявлама тытăнăп!

Дик-Дик савăнăçлăн кулса ячĕ те – калать:

– Илтрĕн пулĕ-ха ĕнтĕ, сана слон шыратчĕ, Коко, – тет.

-80-

– Мĕн кирлĕ вара ăна манран? – айăпсăррăн курăнма тăрăшса ыйтать Коко.

– Тен, çуралнă кун ячĕпе вăл сана мĕн те пулин па рнелесшĕн, – хирĕç тавăрать Дик-Дик. – Анчах, чăннипе каласа н, эсĕ унăн парнине тивĕçлĕ мар. Ун пĕвинче ху мĕн тунине а стăватăн-и?

-81-

– Мĕнех тунă вара эпĕ унта!.. – пĕтĕмпех питĕ лайăх астуса, кăмăлсăррăн мăкăртатать Коко.

Çапла калать те сукмак тăрăх чупса каять. Хăйĕн çуралнă кунĕ, чăннипе, савăнăçлах та марри çинчен шухăшласа пырать.

-83-

Сукмакĕ çинче вăл кĕçех гиппопотама тĕл пулчĕ. Буху кăмăллăн кулать.

– Хм. Манăн сан валли чаплă парне пур, Коко. Çуралнă кун ячĕпе. Пиçсе çитнĕ тутлă кавăн.

– Ах, тавтапуçах сана, Буху. Кавăн çиме питĕ юрататăп эпĕ. Çуралнă кунăма паянтан çулталăкра тăвата хутчен уявлама тытăнăп!

– Э-э... мĕн-ха... Гиппопотама кавăн çĕклесе çӳреме питĕ йывăр, Коко. Çавăнпа эпĕ ăна çăвара хунăччĕ те, астуман та – çисе янă. Питĕ аван, питĕ тутлă кавăнччĕ...

– Эс мĕн, çисе ятăн-и ман кавăна?! – кăшкăрсах ярать кăмăлĕ хуçăлнă Коко.

Буху пуçне сулать:

– Пит аван кавăнччĕ, тĕлĕнмелле чаплăччĕ! Анчах чи кирли, Коко, парни мар, ырă шухăшĕ, сана парне парас теекенĕн ырă кăмăлĕ. А, тата, кĕçех манса кайман, сана слон шыратчĕ, Коко.

Упăте ĕнтĕ ăна, мăшкăлланă чухнехилле, пит-куçне илемсĕррĕн пăрса кăтартать те аяккинелле тапса сикет.

– Çук, вăл тутлă кавăн çиме тивĕçлĕ мар, – пуçне пăркаласа юлать Буху, – юрать-ха, хам çисе ятăм...

-84-

Ывăнса çитнипе, кăмăлĕ хуçăлнипе пуç усса утакан Коко кĕç кăна слона пырса çапăнмарĕ. Çакă пĕр кĕтмен çĕртен пулнăран, вăл шаках хытса тăчĕ, унтан çавăрăнса тарма шутларĕ. Анчах урисем вырăнтан та хускалмаççĕ. Çăвар типсе ларнă.

– Эпĕ... мĕн... э-э... – тытăнчăклăн калама тытăнчĕ упăте, а нчах нимĕн те калаймасть. Куçĕ умне тăп-тăрă шывлă пĕве тухса тăчĕ, хăй ăна пăтратса, вараласа пĕретнине аса илчĕ.

– Çуралнă кун ячĕпе чĕререн саламлатăп, – илтрĕ сасартăк вăл слонăн кĕмăллă сассине.

-86-

Коко ăна хирĕç, пуçне çĕклесе пăхаймасăр, пăшăлтатса анча х калама пултарчĕ:

– Тавтапуç, Томбо...

– Кур-ха, мĕнле парне илсе килтĕм эпĕ сан валли, – терĕ Томбо слон.

Коко пуçне именчĕклĕн çĕклесе çӳлелле пăхрĕ те банансем курчĕ. Пĕр çыхă банан! Сисмесĕрех алли пĕчĕк упăтен çак илĕртӳллĕ çыхă патнелле туртăнчĕ.

Коко хăвăрттăн каялла чакса тăчĕ, хуллен, айăплăн каларĕ:

– Эпĕ сан пĕвӳне вараласа пĕтернĕччĕ, Томбо. Каçар...

Йĕри-тавра пур тĕлте те шăп. Шăплăхра Коко чĕри кăртлатса тапни анчах илтĕнет.

– Эпĕ, Томбо, санăн ырă кăмăлна, санăн хаклă парнӳне тивĕçлĕ мар, – пăшăлтатать пĕчĕк Коко.

– Ку парне, Коко ачам, эпĕ сана каçарнине пĕлтерет. Эпĕ са на çак банансене татичченех каçарнă. Çавăнпа татăрм та вĕсене сана парнелеме, – ăшшăн ăнлантарать пысăк, пысăк слон.

-91-

# ТОТО ЭКВАТОРТА

# ЭКВАТОР

-92-

Тото упăте тăванĕсем патне хăнана кайнă. Тăванĕсем унăн джунглире шалта-шалта пурăннă. Унта сип-симĕс çулçăллă çӳлĕ йывăççем çитĕннĕ, сап-сарă чечеклĕ кӳлĕсем çийĕн лĕпĕшсем вĕлтĕртетсе вĕçнĕ.

Коко упăтене питĕ намăс.

– Тавтапуç, Томбо.

Бանансен çыххи пĕчĕк Кокошăн хăй пысăкăшех.

– Чунтан тав, – тепĕр хут каларĕ те Коко кулса илчĕ. – Эпĕ халех сан пĕвӳне кайса тасатăп.

Çӳлте-çӳлте пысăк слонăн куçĕсем хаваслăн хĕсĕнеççĕ. Анчах пуçне çĕклесе пăхма именекен Коко çакна асăрхаймасть. Мĕскĕннĕн хутланса тăрать вăл Томбо умĕнче.

– Эпĕ ĕнтĕ пĕвене тасатнă, Коко, – ăшшăн, кăмăллăн илтĕнет ырă слонăн сасси.

– Эпĕ сан парнӳне тивĕçлĕ мар... – çаплах пăшăлтатать Коко.

– Илех, илех. Санăн вăл.

Коко сукмакпа каялла утать. Слон панă хаклă парне çинчен шухăшласа пырать. „Эпĕ ăна, çак пиçсе çитнĕ, тутлă банансене, Твига жирафпа, Буху гиппопотампа, Дик-Дик антилопăпа пĕрле ларса çийĕп“, тесе шухăшлать вăл.

Çапла тунă та вара вăл. Унăн çуралнă кунĕ чи савăнăçлă, чи ырă кун пулса тăнă.

Лайăх мар ĕç тума тивнĕ-и сана? Тунă пулсан, çавăн хыççăн хуна ыттисем юратма пăрахнă тесе шутланă, çапла-и? Анчах сана çапах та юратнă, юрата ççĕ те.

Хуна яланах Юратакана пĕлетĕн-и эсĕ? Вăл – Иисус Христос. Вăл сан çылăхусемшĕн асап тӳснĕ. Ху усал ĕç тусан, санăн ӳкĕнме пĕлес пулать, ӳкĕнни çинчен Иисуса калас пулать. Вара, шанса тăр, Вăл сана каçарĕ.

-94-

Сасартăк Тото калама çук çӳлĕ йывăç курнă. Ун патне çывăхарах пынă. Йывăç вулли çине хăма çырса çапнă иккен. „ЭКВАТОР“ тесе çырнă унта. Çакна вуласа тăракан Тото хăй хыçĕнчех Твига жираф сассине илтнĕ.

– Ку вăл питĕ интереслĕ вырăн, – тет хайхи Твига.

– Э-э, çапла, çапла, – çирĕплетет Буху гиппопотам. – Ку вăл пĕтĕм тĕнче варри.

# ЭКВАТОР

-97-

Тĕлĕннĕ Тотон куçĕсем çуталса каяççĕ.

– Чăнахах-и? – ыйтать вăл.

– Чăнах, – тет Твига. – Хăвăн ăçта пулас килет, çавна суйла ма пултаратăн ĕнтĕ эсĕ. Енчен те сылтăмри çав баобаб йывăçĕ çине улăхсан, эсĕ çĕр чăмăрĕн кăнтăр енĕнче пулăн. Экватор урлă каçăн, ара. Кĕскен каласан, хăвăн ирĕкӳ: ăçта пулас килет, суйла!

Тото ĕнсине кăтăрт-кăтăрт хыçса илет. Пĕчĕк упăтене кун пек япаласене ăнланма йывăр.

-98-

Вăл ĕнтĕ кăнтăрти ырă пурăнăç çинчен нумай илтнĕ-ха. Çа вăнпа пуçĕнче тĕрлĕ шухăш çавăрăнать. Упăтесенчен нумайăшĕ кăнтăр енне каçнă теççĕ. Халĕ акă уншăн та çул уçă. Мĕнпурĕ те унăн татăклă шухăш тытмалла та экватор урлă сиксе каçма лла.

„Мĕнле пулĕ-ши пурăнăçам кăнтăрта? – шухăшлать Тото. – Мĕнле туйăп-ши çав баобаб çине çĕр чăмăрĕн кăнтăр пайне куçса ларсан?“

Пăлханнипе чĕтремех тытăнчĕ упăте. Мĕншĕн куçмалла ма
р тет унăн çавăнта, мĕншĕн пурăнмалла мар тет кăнтăрта?
Е çурçер енчех юлни аванрах-и?

Тото парка вăрăм турат тăрăх калле-малле утать, чарăнса тăрать те каллех калле-малле утма тытăнать.

-100-

Сасартăк Тотона пĕр тĕлĕнмелле сасă илтĕнчĕ. Ачаш та илĕртӳллĕ сасă:

– Кăнтăрта эсĕ питĕ аван пурăнма тытăнăн, пĕчĕк упăтем! Ансам часрах çĕр çине, эпĕ сана ăçталла каймаллине кăтартăп. Çулне пĕлетĕп эпĕ! Сана интереслĕ, савăнăçлă кунсем кĕтеççĕ. Эсĕ темĕн те тума пултарăн, чараканĕ никам та пулмĕ!..

-102-

Йывăçсен хӳттинче тăракан жирафпа гиппопотам çакна пĕтĕмпех илтеççĕ, Тотон кăнтăр енне каяс килнине те кураççĕ вĕсем.

– Ку вăл çĕлен! – кăшкăрчĕ Твига. – Эсĕ пирĕнпе туслине пĕлет вăл, çавăнпа сана хăй патне илĕртсе каясшăн. Ан итле çĕлене! Пирĕнпех юл. Çурçĕрте пурăнма татăклă шут ту! Вара телейлĕ пулăн, нимĕнле хăрушлăха та лекмĕн.

-104-

Тото хăйĕн тусĕсене Твигăпа Бухуна аса илчĕ, ырă слона, Дик-Дик антилопăна аса илчĕ. Чĕри ачаш ăшă туйăмпа тулчĕ. Вара татăклă шухăш тытрĕ. Турат тăрăх чупса кайрĕ те хыттăн кăшкăрса каларĕ:

– Эпĕ çурçĕр енче юлатăп! – тарĕ.

Якăлт сикрĕ те турат çине шанăçлăн вырăнаçса ларчĕ.

-108-

– Мĕншĕн-и? Мĕншĕн тесен, эсĕ пĕчĕк-ха. Ӳссен, хăвах ăнла нса илĕн. Илĕртнĕ çул тăрăх мар, хăвăн Турă панă çулу тăрăх утмалла. Мĕн чухлĕ малала утатăн, ху тĕрĕс çул çинче иккенне çавăн чухлĕ лайăхрах ăнланса пыратăн. Вара эсĕ телейлĕ.

Тото çаплах йывăç туратти çинче ларать-ха. Çул кăтартса хăма çине çырнă „ЭКВАТОР“ сăмаха вăл сылтăмран сулаха ялла та, сулахайран сылтăмалла та вуласа пăхать. Аллипе, хӳрипе туратран çакăнса та, калле-малле сулланса та вулать. Унтан каллех хӳрипе туратран çакăнать, каллех чуччу ярăнать. Каллех вулать.

– Тĕрĕс, – терĕ вăл юлашкинчен, эпĕ халĕ çĕнни нимĕн те туймастăп пулин те, пĕлетĕп: эпĕ тĕрĕс шухăш тытнă.

– Çапла. Тĕрĕс калатăн, – кăмăллăн кулса илет Твига.

– Эээ, çапла, çапла, – çирĕплетет Буху. – Ӳснĕçемĕн эсĕ ça кна лайăхрах ăнланса пырăн.

Тото турат çинчен сиксе анчĕ те вĕсемпе пĕрле кайрĕ. Вăл хăй тĕрĕс шухăш тытнăшăн савăнса пырать. Çĕлен, çиллессĕн чашкăрса, тĕмĕсем хушшине кĕрсе пытанчĕ.

-106-

Анчах кăштахран вăл пăлханма тытăнчĕ. Йывăçăн вулли çумне шиклĕн лăпчăнать. Ара, вăл çурçĕр енче юлма шут турĕçке-ха! Ĕнтĕ мĕн те пулин пулмаллах пек. Хăрушă!..

Анчах нимĕн те пулмарĕ. Вăл мĕнпурĕ те чее çĕлене итлемерĕ те, куншăн ним хăрушши те пулмарĕ. Пурте ĕлĕкхиллех юлчĕ.

Акă, унăн тусĕсем те юнашарах: Твига, Буху, Дик-Дик çӳлелле, Тото ларакан турат çинелле, савăнăçлăн пăхса тăраççĕ.

– Çĕлене куçĕнчен пăхса çывăрса кайнă куна нихăçан та ан ман, – терĕ Твига.

Тото хăй кĕçех çĕлен çăварне лекмен хăрушă куна сехĕрленсе аса илчĕ. Анчах юнашарах ĕнтĕ вăрăм мăйлă жирафа сасси илтĕнчĕ:

– Тото, тен, эсĕ кăнтăрта кунтинчен лайăхрах тесе шухăшлатăн? – тет Твига. – Ан ĕнен çĕлене. Нихăçан та çак баобаб йывăçĕнчен лерелле иртсе ан кай. Ку баобаб хамăр енче, çĕр чăмăрĕн çурçĕр пайĕнче, ларать. Ан ман çавна.

Тото килĕшсе пуçне сулчĕ. Анчах вăл çаплах-ха нимĕн те та вçăрса илеймест.

– Твига, эпĕ, çĕлене итлемесĕр, татăклă шухăш тытса, хамăн татăклă сăмахăма каларăм. Анчах мĕншĕн-ха нимĕн те, нимĕнле уйрăмлăх та туймастăп? – ыйтать упăте. – Кăнтăрта ырă теççĕ пулсан, мĕншĕн-ха манăн çурçĕр енче юлмалла?

-110-

Хăш çул тĕрĕссине пĕлменни санăн та пулнах ĕнтĕ, тусăм. Тепĕр чухне эсĕ суя çулпа та утнă. Ун пек самантсенче эсĕ Иисусран тĕрĕс çул çине тухма пулăшмашкăн ыйтнă.

Эсĕ, ĕçӳсене Турра юрăхлă тусан, çĕннине, тен, нимĕнех те туйса илмĕн, анчах санăн пурăнăçу улăшăнĕ, лайăх еннелле кайĕ.

# ЭКВАТОР

-112-

– Дауди, каллех мĕнле те пулин халап каласа кăтарт-ха, – ыйтнă ачасем.

Дауди кăштах шухăша кайса ларнă. Унтан ачасенчен ыйтнă:

– Хăйне мăнна хума пăхнă пĕр упăте çинчен илтнĕ-и эсир? – тенĕ. – Пысăка ĕмĕтленнĕ вăл, анчах кăшт çеç пуçне çимен. Пĕлместĕр-и? Апла пулсан, итлĕр...

-113-

# АРĂСЛАН ТИРНЕ ТĂХĂННĂ УПĂТЕ

– Джунглире паян питĕ хӳхĕм кун! – савăнса калаçнă тискер кайăксем.

Буху гиппопотам анчах нимĕн те шарламан. Ăна пĕр япала шухăшлаттарнă.

– Эй, Твига, – ыйтнă вăл юлашкинчен жирафран, арăслансем йывăç çине хăпараççĕ-и?

– Питĕ сайра пулать ун пекки, – тенĕ Твига.

– Эппин, кур-ха ав çавна, – тет хайхи Буху. – Вăл халь тин кăна-ха, хӳрипе йывăç турачĕ çинчен çакăнса, э-э, чуччу ярăнса тăратчĕ. Тен, тарăхнипе çапла тăвать вăл?..

– Ман шутпа, ку арăсланран пирĕн нимĕн чухлĕ те шикленме кирлĕ мар, – кулса илет ăслă Твига. – Атя, кайса сывлăх сунар ăна.

– Эй, эсĕ унта, йывăç çине улăхса кайнăскер, мĕнле пурăна тăн?! – кăшкăрать Буху.

-114-

– А? Мĕн?! Ан çывăхарăр ман патăма, пурсăра та тытса çура тăп! Р-р-р!

– Чăнахах-и? – кулать Твига. – Кам вара эсĕ?

– Курмастăн-им? Эпĕ – тискер кайăксен патши!

– Тото! Эсĕ арăсланăн кĕве çисе янă тирне пĕркенсе янă та хуна арăслан тесе шутлатăн. Кулăшла!

– Ан хăйнă пул манпа ун пек калаçма, Твига, атту çисе яра тăп сана! Эпĕ текех упăте мар. Эпĕ арăслан пулса тăнă. Эпĕ ĕнтĕ пур ĕçе те арăслан пек тăватăп. Арăслансем мĕн çинине çиетĕп. Арăслан пек уласа хăрататăп: р-р-р! Арăслансем ăçта çӳреççĕ, çавăнта çӳретĕп!

-117-

Твига ăна ăс парса калаçать:

– Арăслан пулас тенипех арăслан пулаймăн, Тото.

– Ух! – ассăн сывласа илет Буху.

– Мĕ-ĕн?! – кăшкăрса ярать упăте. – Арăслан тирĕ ман çинче питĕ лайăх ларать, шăпах мана юрăхлă! Эпĕ капла чаплăн, хăрушшăн курăнатăп!..

– Арăслан пулас тесен, арăслан пулса çуралмалла. Пачах урăх чĕрчун пулса тăмалла сан, – ăнлантарать Твига.

-118-

Анчах Тото ун сăмахĕсене хăлхана та чикмест.

– Кур-ха, Буху, мĕнлерех эпĕ чăн-чăн арăслан пек утатăп! – кăшкăрашать вăл. – Мĕнлерех маттур! Пĕлесчĕ халĕ ман, джунглире çакна курма пултаракан ăслă тискер кайăк миçе-ши?

– Миçе пулсан-пулмасан та, эсĕ шутланинчен пĕр кайăк саха лтарах, – тет Двига. – Эсĕ хăрушă вăйă пуçланă.

– Ытти тискер кайăксене тĕл пулсан, мĕн пулĕ-ши капла са нпа? – сăмах тĕртсе хурать Буху.

Тото ихĕлтетсе кулать:

– Паян ирхине гиенăна тĕл пултăм. Курнă-курманах, куçран пач çухалчĕ. Арăсланран мĕн кĕтмеллине пĕлет вăл.

– Кăмăлĕ пăсăлнă носорога тĕл пулсан, мĕн пулĕ санпа? Выçă леопарда тĕл пулсан, мĕн пулĕ?

-120-

Тото тăрăшсах хăрлатса кăтартать:

– Мĕн пулĕ, мĕн пулĕ... Р-р-р! Мана! Мана, джунгли патшине, курĕç те хăраса кайĕç. Эпĕ хăрлатнине илтсен, чĕтĕресе ӳкĕç. Эпĕ ӳхĕрнине илтсен, урисене çĕре тивертмесĕр чупса тарĕç!

-121-

„Хм, ку упăтене тип шар курмасăр та ăс кĕрес çук“, Тотона шеллесе шухăшлать Буху.

Сасартăк вăл темле хăрушлăх пуррине сиссе илчĕ.

-122-

– Асăрханăр! – кăшкăрса ячĕ хайхи. – Эпĕ кунталла леопард килнине туятăп. Тото, вăл сана куриччен, часрах йывăç çине хăпарса тар! Кайрăмăр, Твига!

– Итле Буху мĕн каланине! – кăшкăрчĕ Твига. – Арăслан вăййине кайран выльăн!

Тото пит-куçне çеç пĕркелентерсе илчĕ.

– Хăрамастăп эпĕ! Леопардсем арăсланран мĕн кĕтмеллине лайăх пĕлеççĕ. Р-р-р! Каях, Буху, кайса пытан, хăратăн пулсан.

-124-

– Леопард килет-и кунталла? Эх, кăтартатăп та пĕрре ăна! Р-р-р! Р-р!!

Тото упăте çийĕнчи арăслан çилхипе ластăр силленсе илчĕ те хаваслăн кулса ячĕ:

– Мĕнлерех хăраса ӳкĕ-ха ак манран!

Сасартăк ăна такам хаяррăн хăрлатни илтĕнчĕ.

– Кам ку? – ыйтать Тото.

Леопард каллех хăрлатрĕ.

– Тар, Тото! – кăшкăрать аякран Твига.

– Хăвăртрах тар! – кăшкăрать Буху.

Тото каялла çавăрăнса пăхрĕ те леопардăн тискеррĕн çута лса кайнă куçĕсене курчĕ. Леопард татах хаяррăн хăрлатрĕ. Тото сасси сасартăк темле мĕскĕннĕн, нăйкăшуллăн илтĕнсе ка йрĕ:

– Ларах. Çавăнтах лар, ырă, лайăх кушакăм!.. Ан кил кунта лла. Лар тетĕп, ара, сана. Эпĕ – тискер кайăксен патши е эпĕ... Пуулăшăрр!

-126-

Тото, упăтелле вăр-варлăхпа, пĕррех йывăç çинелле сикет, чи çинçе турат çине кайса ларать. Арăслан тирĕ унăн хывăнса ӳксе çĕр çине выртса юлать.

-129-

Леопард та çав йывăç çинех вашлаттарса хăпарать. Тĕреклĕ турат çине ларса, Тотона куç илмесĕр сăнама тытăнать. Çапла вăл кунĕпе кĕтет, упăтен тутлă ашĕ çинчен ĕмĕтленсе шухăшлать. Хĕвел анса каç пулать, уйăх шуса тухать. Леопард çаплах кĕтет. Унтан, вăл тĕлĕрсе кайсан, йывăç патне Твига чупса пырать те, Тото ун мăйĕ çине сиксе утлнать. Çапла леопард çăварне лекесрен хăтăлать.

– Акă мĕнле вăл упăтелле ăслăлăх, – тет Твига.

Тото хурлăхлăн пуç сулса илет.

-130-

– Тĕрĕс каланă Твига, çапла мар-и? – кулса илнĕ Дауди.

– Тĕрĕс! Тĕрĕс! – харăссăн тавăрнă ачасем.

– Ха-ха-ха! – кулса янă М’гого ятла чи пĕчĕк ачи. – Эх, ухмах та Тото! Арăслан тирне тăхăннипе, арăслан пек ӳхĕрнипе вăл нихăçан та чăн-чăн арăслан пулаймасть вĕт-ха!

– Куна вăл леопарда курсанах тавçăрса илнĕ, – пӳлнĕ ăна Елизавета.

– Тĕрĕс, – килĕшсе пуçне сулнă Дауди. – Эпир те христиансем пек курăнма христиансем пек калаçма тăрăшнипех нихăçан та чăн-чăн христиансем пулаймăпăр. Пурăнать-и пирĕн чĕресенче Иисус е эпир христиансен „тирне“ çеç тăхăнса янă, çакă вăл пирĕншĕн пĕр-пĕр йывăрлăх килсе тухсан, е пире мĕн те пулин хăратса ӳкерсен, е кам та пулин тарăхтарсан тӳрех паллă пулĕ.

– Пирĕн чĕресенче Иисус пурăнать пулсан, эпир христиансем-и вара? – ыйтнă М’гого.

Дауди кăмăллăн кулса илнĕ:

– Çапла. Иисус Хăйне чĕнекен патне кашни патнех килет, унран çĕнĕ çын тăвать.

-132-

Тепрехинче баобаб йывăçĕ айĕнче Дауди ка
ллех ачасемпе пĕрле ларнă. Çĕнĕ халап кала
са кăтартма вăхăт çитнĕ.

– Паян эпĕ сире тĕкĕр çинчен каласа кăта
ртăп, – пуçланă Дауди. – Вăл яланах кам
мĕнлине тĕп-тĕрĕс кăтартать.

– Яланах-и? ыйтнă ачасем.

– Яланах.

-133-

# ГИППОПОТАМ ТАТА ТĔКĔР

-135-

Тото упăте кокос мăйăрĕ тупнă та çакăн çинчен са вăнсах Дик-Дик антилопăна каласа панă.

– Дик-Дик, эпĕ тутлă-тутлă кокос мăйăрĕ тупрăм! Атя, Буху гиппопотама шыраса тупар. Вăл пире мăйăра катса патăр. Тискер кайăксенчен унăнни пек çирĕп шăл никамăн та çук.

Гиппопотама вĕсем пит сарлаках мар шыв хĕрринче шыраса тупнă.

– Буху! – кăшкăрса янă упăте. – Эсĕ кунта иккен, епле аван!

– Ман шутпа, вăл пире илтмест, – тенĕ Дик-Дик.

Тото Буху çинелле тинкерсе пăхнă.

– Тен, вăл çывăрать? Çук, куçĕсем уçă. Манăн унпа калаçмаллах!

Вара вăл гиппопотампа хаваслăн калаçма тытăннă:

– Буху, манăн ырă, самăр тусăм!..

– Ĕнтĕ эсĕ йăлтах пăсса хутăн... – мăкăртатса та вăрать ăна Буху. – Эпĕ кунта шыв лăпланасса кĕтсе тăраттăмччĕ. Вăл мана аларĕ: „Шыв чӳхенме чарăнса лăплансан, эсĕ унта хăвăн сăнна курăн“, терĕ.

– Кам? Кам каларĕ? – тĕлĕнет Тото.

-136-

– Ырӑ ватӑ упӑте. Вӑл мана каларӗ: „Шыв лӑпланса ҫитсен,
пӑхсам ун ҫинелле, унта хӑвӑн сӑнна курӑн“, терӗ.
Калаҫӑва ӗнтӗ кӑмӑллӑ Дик-Дик хутшӑнчӗ:
– Эпир килсе шыва хумхатнӑшӑн, пире питӗ шел. Анчах
мӗншӗн курас килет-ха санӑн хӑвӑн сӑнна?
– У, – кулса илчӗ Буху, – ҫав ырӑ ватӑ упӑте мана хитре терӗ.
Халӗ манӑн хам хитрине курас килет.

-138-

– Ӑҫта тӗл пултӑн эсӗ ватӑ упӑтене? – ыйтать Тото кулкала
са. – Вӑл, мӗн, хӗртсе пӑхакан хӗвел питтинче ларатчӗ-и?
– Хм, ҫук. Вӑл, тӗрӗссипе каласан, шыв хӗрринче тӑратчӗ.
Ҫапла, тепӗр енне каҫаймасӑр аптӑраса тӑратчӗ. Шывӗ уншӑн
тарӑн, вӑл вара ишме пӗлмест иккен. Вӑл мана каларӗ: „Мӗн
тери хитре эсӗ, гиппопотам!“ – терӗ.

-141-

Тото тавҫӑруллӑн пуҫ сулса илчӗ:
– Вӑл, эсӗ хитрине курнипе пӗрлех, эсӗ лайӑх ишме пулта
рнине те, эсӗ кӑмӑллине те, эсӗ ыттисене яланах пулӑшма ха
тӗррине те ӑнланса илнӗ пулӗ ӗнтӗ.
– Ҫапла-а, – кӑмӑллӑн кулкалать Буху. – Вӑл ман ҫинчен
пӗтӗмпех пӗлнӗн туйӑнчӗ, унччен нихӑҫан курман пулин те...
Тото куҫӗ каллех чеен ҫуталса илчӗ:
– Ӑнланмалла, ӑнланмалла! Вӑл сана нумай ырӑ сӑмахсем ка
ланӑ та, эсӗ ӑна шыв урлӑ каҫарса янӑ. Апла эсӗ мана та
пулӑшӑн. Куратӑн-и, акӑ, кокос мӑйӑрӗ. Катса пар ӑна, тарха
сшӑн, пире, савнӑ Буху!

-142-

– Питĕ ырă ватă упăте... – хăй тĕллĕн мăкăртатать Буху. – Хитре гиппопотам терĕ мана. Лайăх упăте, чăн-чăн тус пек...

Тото гиппопотам умне пырса тăчĕ:

– Буху, эпĕ те санăн тусу, – тет вăл. – Эсĕ хитри çинчен кала манччĕ-и вара эпĕ?

– Каламан. Халиччен нихăçан та каламан.

Буху сассинче ӳпкев илтĕнет.

– Ара, куна эсĕ тахçанах пĕлет пулĕ тенĕ эп! Мăнаçланса ан кайтăр тесе анчах шарламан эп! Буху, эпĕ сана сăнран пăхса тăнă чухне эсĕ мĕнлине йăлтах куратăп: ырă кăмăлна, хăюлăхна, вăйна куратăп!

– Мĕнле куратăн-ха çакна пĕтĕмпе эсĕ сăнран пăхнипех?

– Санăн питӳ мĕнлинчен куратăп, – хĕрсех ăнлантарать Тото. – Катса парсам-и мăйăра.

-144-

– Çук, халĕ катса тăраймастăп, – мăкăртатать Буху. – Эпĕ тӳлек шыв шырама каятăп, мĕншĕн тесен малтан ман хамăн сăнăм-питĕме курас килет.

– Сăнна курасах тетĕн пулсан, эпĕ сана тĕкĕр илсе килсе па рăп, – терĕ аптăранă Тото. – Анчах, сăнна пăхсан, катса парăн-и пире мăйăр?

– Малтан хама курас килет ман, – хăйĕннех перет Буху.

-146-

Акă хайхи Тото пысăк тĕкĕр сĕтĕрсе килчĕ те ăна Буху умне пырса лартрĕ.

– Пурте айккинелле пăрăнăр! – кăшкăрать вăл. – Тĕкĕр сан валли анчах, Буху. Акă, пăхсам, ху мĕнлине кур.

Буху тĕкĕр умне пĕшкĕнсе пăхать.

– Ай, мĕн-ара ку? – тĕлĕнсе ыйтать вăл, сасси тытăнать.

– Епле – мĕн? – ун патнерех пырать Тото.

– Ара, камăн мăнтăр, капашсăр мăнă пичĕ унта, тĕкĕр а шĕнче?!

– Санăн, – кулать упăте.

– Манăн? Пулма пултараймасть! Эпĕ ун пек мар. Çук, ун пек марах эпĕ... Камăн çавăн пек илемсĕр пулас килĕ? Кураймастăп эпĕ тĕкĕре!..

-148-

Буху питĕ тарăхса кайрĕ. Сасси аслати пек кĕрлет.

– Эсĕ каллех шӳтлетĕн, Тото! Эсĕ яланах ухмахла шӳтлетĕн! „Мĕнле хитре гиппопотам!“ – терĕ мана ватă упăте. Ăçтан-ха ва ра ку тĕкĕр çинчи пек пулам эпĕ?! Ухмаха тухнă вăл, çак тĕкĕр! Шӳтлесех терĕн пулсан, кулас терĕн пулсан манран, Тото, атя, хур тĕкĕре çак тĕле!

Тото гиппопотам çине нимĕн ăнланмасăр пăхса тăрать.

– Хур тенĕ! – хушать Буху.

– Мĕн тăвасшăн эсĕ?

-150-

– Акă мĕн! – тесе кăшкăрса ярать те Буху урипе тĕкĕр çине шаплаттарса пусать.

Тĕкĕр чăнкăр-чанкăр! çĕмĕрĕлсе арканать.

– Çĕмĕрсе пăрахрăн вĕт-ха эсĕ ăна! – тарăхса кăшкăрать ĕнтĕ Тото упăте те.

– Çĕмĕрĕлтĕр! Курăймастăп эпĕ тĕкĕрсене!

Чунĕ кӳтсе килнĕ Буху шыва шампăртаттарса кĕрсе каять. Тотона мăйăр катса памаллине аса та илмест.

-153-

– Мĕнле айван Буху! – тĕлĕннĕ ачасем. – Тĕкĕр ăна тĕрĕссине кăтартнă вĕт-ха!

– Çапла. Анчах ăна тĕрĕслĕх килĕшмен, – ăнлантарнă Дауди.

Вăл каллех Библи кĕнекине çĕклесе кăтартнă.

– Пĕлетĕр-и, çак Библи вăл – Туррăн пысăк тĕкĕрĕ. Хăйне вулакансене Вăл пурне те тĕрĕссине кăтартать. Кашни мĕнлине, кашнине Турă мĕнле курнине кăтартать.

– Анчах никамăн та унччен мĕнле пулнă çавăн пек юлма юрамасть вара, – тенĕ М’гого ятлă ача.

– Тĕрĕс, – килĕшнĕ унпа Дауди. – Библире эпир, ара, хамăра çеç мар, та та Иисуса та куратпăр. Мĕн тесе калать-ха Вăл пире, ачасем? „Пурте килĕр Ман патăма – пĕчĕккисем те, çитĕннисем те. Эпĕ сире Турра савăнăç кӳрекен çĕнĕ çынсем тăвăп“, тет. Турра пăхăнса тăракан çын Туррăн пысăк тĕкĕрĕ витĕр савăнса пăхĕ.

-155-

# ТОТО УПĂТЕПЕ ПĂСĂК ÇĂМАРТА

-156-

Икĕ пĕчĕк упăте Тотопа Коко нихăçан та лăпкăн лараймаççĕ. Вĕсем турат çинчен турат çине сикеççĕ, пĕр-пĕрне хăвалама лла выляççĕ. Çавăнпа вĕсен хырăмĕсем питĕ час выçаççĕ. Тотопа Коко банан çиеççĕ, çырла çиеççĕ, кăпшанкăсемпе măйăрсем çиеççĕ. Анчах пуринчен ытларах пĕчĕк упăтесем çăмарта юратаççĕ.

Пĕррехинче Тотопа Коко ватă йывăç тураттисем хушшинче кайăк йăви тупрĕç.

– Эхе, – терĕ Тото, ăçта йăва пур...

– ... çавăнта çăмарта та пур! – ихĕлтетре Коко.

Тото йывăç çине йăпăр-япăр улăхса кайрĕ те – пăхать: йăва чăнахах та пушă мар, унта пысăк сăрă çăмарта выртать.

-159-

– Тыт! – кăшкăрчĕ Тото.

Коко аллисене çӳлелле тăсрĕ. Пăрахнă çăмартана тытасшăнччĕ вăл. Тытса ĕлкĕреймерĕ. Çăмарта ша платса ӳкрĕ те çĕмĕрĕлсе кайрĕ. Усал шăршлă симĕс шĕвек юхса тухрĕ ун ăшĕнчен.

– Хи! Шăршлă! – йĕрĕнсе сăмсисене пăркаларĕç те упăтесем, малалла чавтарчĕç.

Çĕмĕрĕлнĕ çăмарта шĕвекне савăнсах шăнасем сырса илчĕç.

-160-

Кăшт айккинерехре тăракан Твига жираф, Буху гиппопотам, Дик-Дик антилопа пĕчĕк упăтесен ашкăнчăк ĕçне пĕтĕмпех курса юлчĕç.

– Эккей, – мăкăртатать Буху, – мĕнле-ха вăл лайăх çăмартах пăсăлать-ха, япăх, шăршлă çăмарта пулса тăрать?

Твига кулса ячĕ:

– Хур эсĕ çăмартана хĕвел питтине, вăл ăшăпа часах пăсăлса каять.

– Хм, хм, пăсăлнă çăмартаран каллех лайăх çăмарта тума ма й çук-и? – ыйтать Буху.

– Шел пулин те, май çук, – ăнлантарчĕ Дик-Дик.

Твига килĕшсе пуç сулчĕ:

– Пăсăлнă çăмарта нихăçан та тепĕр хут лайăх çăмарта пула ймасть.

-163-

Çак вăхăтра Тотопа Коко куккăшĕ, ватă Ниани, сукмак тăрăх шыв хĕрринелле анса пынă. Аллинче ун çăмарта пулнă. Çăма рти ăшах-мĕн-ха. Ниани ăна тин кăна Куку чăх йăвинчен илнĕ пулнă.

Ниани тӳсĕмсĕррĕн тутине çулакалать. Акă вăл йĕплĕ хулă йĕппипе çăмарта пуçне чиксе шăтарчĕ те çăмарта шуррипе са ррине киленсех ĕçсе ячĕ. Ĕçнĕ чухне питçăмартисем путса кĕчĕç ун, куçĕ-пуçĕ чарăлса кайрĕ.

-164-

Пĕчĕк упăтесем питĕ тĕмсĕлсе пăхса тăчĕç çакна.

Çăмарта хуппи пушанса юлсан, Ниани ăна çĕре пăрахрĕ. Упăтесем пурте çапла тăваççĕ.

– Çăмарта – упăте хырăмĕшĕн чи усăллă апат, – куçне хĕссе илсе каларĕ кăмăлĕ тулнă Ниани.

Вăл каллех тути хĕррисене çулакаласа илчĕ те çапла ăнла нтарчĕ:

– Çапла. Анчах астăвăр: кашни-пĕр çăмартах – тутлă мар!

-167-

Ниани кукка хӳрипе туратран явкаласа тытрӗ. Унтан ури ҫине тăчӗ. Шӗвӗр пӳрнине ҫӗклесе, пӗчӗк упăтесене малалла ăнлантарчӗ: – Сирӗн акă мӗне пӗлмелле: хăш-пӗр ҫăмартасем шăршлă, тути ҫук вӗсен, хырăма та тăрантармаҫҫӗ!

-169-

Тотопа Коко, пуҫ сулса, ҫапла ыйтрӗҫ:

– Калама пултаратăн-и эсӗ пире: мӗнле ҫăмартасем лайăх, мӗнлисем япăх?

Ниани тӗплӗн, васкамасăр ăнлантарма тытăнчӗ, кашни сăма ха суйласа калаҫать. Вăл хăрах аллине ҫӗклерӗ те пуҫ пӳрнепе шӗвӗр пӳрне хушшинче ҫăмарта тытса тăнă пек туса кăтартрӗ.

– Хăшӗ-пӗри ҫиес тенӗ ҫăмартана, хӗвеле хирӗҫ тытса, витӗр пăхать. Анчах асăрхаттаратăп! Куҫ йăнăшма пултарать. Хăшӗсем ҫăмартана хăлха ҫумне тытса тăнлаҫҫӗ, – малалла ка лаҫрӗ Ниани, аллине хăлха тӗлне тытса. – Анчах ҫакă та ша нчăклă мел мар.

Вăл малалла ӳпӗнчӗ:

– Ӗненетӗр-и те, ӗненместӗр-и те, анчах ҫăмартана шăршласа пăхма ҫӗмӗрекенсем чи айван упăтесем!

Пӗчӗк упăтесем пуҫӗсене хурлăхлăн сулса илчӗҫ. Тото йăваш сасăпа ыйтрӗ:

– Хаклă кукка, эсӗ питӗ ăслă, каласам, тархасшăн: мӗнле пӗлмелле ҫапах та хăш ҫăмарта лайăххине?

-170-

Хăйĕн хакне пĕлекен Ниани тивĕçлĕн хирĕç тавăрса каларĕ:

– Акă мĕнле. Эсир çăмартана шыв хĕррине çĕклесе анатăр та çыран айне шыв çине хуратăр.

Сăмахĕ витĕмлĕ пултăр тесе, вăл пĕр хушă шăпăрт пулса тăчĕ. Куçĕсемпе чăл-чал пăхкаларĕ. Вара малалла калаçрĕ:

– Итлĕр те астуса юлăр: шывра путман çăмартасем, – тепĕр хут калатăп, путман çăмартасем, – пăсăлнă çăмартасем. Енчен те сире çавăн пек çăмарта лекрĕ пулсан, хăрах алăпа сăмсана чăмăртаса, тепринпе çăмартана мĕн май килнĕ таран инçетерех ывăтăр!

Ниани каллех шăпланчĕ. Унтан хыттăн, уçăмлăн, кашни сăма ха лайăххăн астуса юлмалла каларĕ:

– Çăмарта шывра путать пулсан, вăл вара çиме юрăхлă çăма рта, аван çăмарта!

-173-

Твига, Буху, Дик-Дик çакна та пĕтĕмпех курса тăчĕç. Ватă Ниани джунгли варринелле кĕрсе кайрĕ ĕнтĕ. Пĕчĕккисем тура т çинчен турат çине сиккелесе выляма пуçларĕç.

– Ниани питĕ ăслă, – терĕ Твига жираф.

– Çапла, çапла, э-э, – килĕшрĕ Буху гиппопотам. – Тотопа Кокона вăл питĕ усăллă канаш пачĕ.

– Мĕнле савăнăçлă халь вĕсем! – хĕпĕртет Дик-Дик антилопа .

-175-

Çак халапсенче мĕн-мĕн калани çынсем хушшинче те тĕл пулать. Эпир те тепĕр çын чунĕнче мĕн пуррине курма пултараймастпăр. Пĕр Иисус çеç витĕр курса тăрать. Вăл эпир мĕн шухăшланине йăлтах пĕлет, пирĕн никам курман утăмсене курать. Вăл тата та пысăкраххине тума пултарать, тăвать те: Вăл япăх çынсенчен лайăх çынсем тăвасшăн. Пирĕн Унран çакăн çинчен ыйтмалла кăна.

ТУХĂÇРИ
ÇУТĂ

**ПАУЛЬ УАЙТ**

# ТОТО
# УПĂТЕПЕ
# УНĂН
# ТУСĔСЕМ

**Художникĕ Петр Орам**

Copyright © 1984 by Paternoster Press
Russian edition © 1991 by Licht im Osten

П. Уайт
Приключения Тото и её друзей
Перевод на чувашский язык
© 1995 «Свет на Востоке»

ПАУЛЬ УАЙТ ТОТО УПĂТЕПЕ УНĂН ТУСĔСЕМ 15.110